ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНĔ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "РАҪҪЕЙ ФЕДЕРАЦИЙЕН ХĔҪ-ПĂШАЛЛĂ ВĂЙĔСЕМ УМĔНЧЕ ТĂРАКАН ЗАДАЧĂСЕНЕ ПУРНĂҪЛАМА ХĂЙСЕН ИРĔКĔПЕ ПУЛĂШАССИ ҪИНЧЕН КАЛАКАН КОНТРАКТ ТУНĂ, РАҪҪЕЙ ФЕДЕРАЦИЙЕН ПУҪĔСЕНЕ ХУНĂ (ВИЛНĔ) ГРАЖДАНĔСЕН ҪЕМЙИСЕН ЧЛЕНĔСЕНЕ ПĔР ХУТЧЕН ПАРАКАН УКҪА ТЎЛЕВĔ ҪИНЧЕН" САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КĔРТЕССИ ҪИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2024 çулхи çĕртме уйăхĕн 14-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Раҫҫей Федерацийĕн Хĕç-пăшаллă Вăйĕсем умĕнче тăракан задачăсене пурнăçлама хăйсен ирĕкĕпе пулăшасси çинчен калакан контракт тунă, Раҫҫей Федерацийĕн пуçĕсене хунă (вилнĕ) гражданĕсен çемйисен членĕсене пĕр хутчен паракан укçа тўлевĕ çинчен" 2022 çулхи раштав уйăхĕн 23-мĕшĕнчи 129 №-лĕ саккунне ("Республика" хаçат, 2022, раштав уйăхĕн 28-мĕшĕ; 2024, нарăс уйăхĕн 21-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) ятне ", Раҫҫей Федерацийĕн Хĕç-пăшаллă Вăйĕсем умĕнче тăракан задачăсене пурнăçлама пулăшакан организацисемпе контракт тунă (ытти право хутшăнăвĕсенче тăнă) Раҫҫей Федерацийĕн гражданĕсен" сăмахсем хушса хурас;

2) 1 статьян пĕрремĕш абзацне çакăн пек çырса хурас:

"Çак Саккун Раççей Федерацийĕн Хĕç-пăшаллă Вăйăсем умĕнче тăракан задачăсене пурнăçлама хăйсен ирĕкĕпе пулăшасси çинчен калакан контракт тунă Раççей Федерацийĕн гражданĕсен, Раççей Федерацийĕн Хĕç-пăшаллă Вăйăсем умĕнче тăракан задачăсене пурнăçлама пулăшакан организацисемпе контракт тунă (ытти право хутшăнăвĕсенче тăнă) Раççей Федерацийĕн гражданĕсен, Чăваш Республикин территорийĕнче çуралнă тата (е) пурăннă, 2022 çулхи нарăс уйăхĕн 24-мĕшĕнчен пуçласа Украина, Донецк Халăх Республикин тата Луганск Халăх Республикин территорийĕсенчи, çавăн пекех 2022 çулхи авăн уйăхĕн 30-мĕшĕнчен пуçласа Запорожье облаçĕн тата Херсон облаçĕн территорийĕсенчи ятарлă çар операцине хутшăнса пуçĕсене хунă (вилнĕ) Раççей Федерацийĕн гражданĕсен (малалла çак Саккунра – доброволецсем) çемйисен членĕсене хушма социаллă пулăшу майĕпе тивĕçтернипе çыхăннă хутшăнусене йĕркелет.".

2 статья

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет тата 2022 çулхи нарăс уйăхĕн 24-мĕшĕнчен пуçланнă право хутшăнăвĕсене пырса тивет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ – О. Николаев

Шупашкар хули
2024 çулхи çĕртме уйăхĕн 14-мĕшĕ
42 №